26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАРТ 10 ЭРНЕКУН 49(6544) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени нуса, ИНГУЛЕЦ шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен çав шывăн хĕвеланăç енчи çирĕп оборонине татнă, тăватă кун хушши çапăçса 3 километр тарăн пусласа 60 километр таран малалла куçнă, тата нимĕçсен 170 километра çити сарăлса, ытти чылай пунктсене çавăрса илнĕ.

Çав наступление пирĕн çарсем танксен вăйĕ тата нумай тата пехотнăй дивизине йывăр сухатусем кӳнĕ, Николаев облаçĕн район центрĕсене — НОВЫЙ БУГА тата КАЗАНКАНА — туртса илнĕ, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă тата ДОЛИНСКАЯ—НИКОЛАЕВ чугун çула татнă.

Çапăçусенче ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-лейтенантăн ТАНАСЧИШИНĂН тата танковăй çарсен генерал-лейтенантăн ПУШКИНĂН танкисчĕсем, МОРОЗОВ генерал-майорăн, КРАВЦОВ генерал-майорăн, ГЛАЗУНОВ генерал-майорăн, КОТОВ генерал-майорăн, РУЧКИН генерал-майорăн, КОСОБУЦКИЙ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-лейтенантĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорĕн ПОЖАРСКИЙН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКАН артиллерисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн СУДЕЦКАН летчикĕсем тата инженерлă çарсен генерал-лейтенанчĕн КОТЛЯРАН понтонерĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртса палăртса кăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «НОВОБУГСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 9-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, кисĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, нимĕçсен оборонине татнă УКРАИНАРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Пирĕн чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, нимĕçсен оборонине татнă çĕрте пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 9-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуса, çăварса илмелли маневра фронтĕпех атака тунипе пĕрле ăстан туса, паян, мартăн 9-мĕшĕнче, СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулипе—нимĕçсен ПРОСКУРОВ хули енчи оборонин тĕревлĕ пахаптине — тытса илнĕ.

СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулине тытса илессишĕн пыракан çапăçусенче ГРЕЧКО генерал-полковникăн, РЫБАЛКО генерал-полковникăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн, ПОПОВ генерал-майорăн, ГОРДЕЕВ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕн БРИЧЕНКОНАН артиллерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВАН танкисчĕсем тата авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИЙН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртса кăварас тесе, СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «СТАРОКОНСТАНТИНОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 9-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулине ирĕке кăларнă УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Пирĕн чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, СТАРОКОНСТАНТИНОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 9-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 7-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Тарнополь облаçĕнчи район центрне — ПОДВОЛОЧИССК хулипе пысăк чугун çул станцине, Каменец-Подольск облаçĕнчи СТАРАЯ СИНЯВА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — РЫДОМЫЛЬ, СВИНЮХИ, СТАРЫЙ ОЛЕКСИНЕЦ, ДОБРОВОДЫ, ИГРОВИЦА, КЛЕБАНОВКА, КОРШИЛОВКА, ВЕРБОВЦЫ, БОЛЬШИЕ ПУЗЫРКИ, ГРАЧИ, ЗЕЛЕНЦЫ, ЖАБЧЕ, САМЧИКИ, СВИННАЯ, ЛАДЫГИ, ЛАЖАВА, ДЕСЕРОВКА, ПАСЕЧНА, ИВКИ, ТЕРЕШПОЛЬ, КАЧАНОВКА, СКАРЖИНЦЫ, БЕСПЕЧНА ялĕсем тата ЧЕТЫРБОКИ, БОЛЬШИЕ ПУЗЫРКИ, ЛАЖАВА чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем наступлени туса пыракан чылай участоксенче тăшманăн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем контратакăсене кĕре-кĕре пайнă. Çав контратакăсене пурне те сирсе янă. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 71 самолетне персе ӳкернĕ.

МАРТĂН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 8-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Каменец-Подольск облаçĕнчи ЧЕРНЫЙ ОСТРОВ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ЗАХАРОВЦЫ, ГРУЗЕВИЦА, БОЛЬШИЕ ЗОЗУЛИНЦЫ, МАЛЫЕ ЗОЗУЛИНЦЫ, ТЕРЕШКИ, МАЗЕПИНЦЫ, КРЕМЕНЧУГИ, МАЛЫЙ ЧЕРНЯТИН, БУТОВЦЫ, КАПУСТИН, КРАСНОСЕЛКА, ЖЕРЕБКИ, НЕМИРЕНЦЫ, ВОЛОСОВЦЫ, ПИЛЯВА, ЛИСАНОВЦЫ, БУГЛАИ, ТЕЛЕЖИНЦЫ, ВОЙТОВЦЫ, САЛЬНИЦА, МОРОЗОВКА, МАРКУШИ. Пирĕн çарсем СТАРО-КОНСТАНТИНОВ хули патне таччăнах пырса çитнĕ, халĕ тăшманпа хула тулашĕнче çапăçаççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 71 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 98 самолетне пĕтерсе тăкнă

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман вăскаса хăйĕн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене илсе пынă та темиçе хутчен те контратакăсем пуçласа янă. Пирĕн танкистсемпе пехотинецсем нимĕç çарĕсене хăваласа янă, унтан, çав тери хăвăрт пырса çапса, Каменец-Подольск облаçĕнчи Черный Остров район центрне тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла туртса илнĕ. Черный Островшăн пынă çапăçура нимĕç пехотин икĕ полкне аркатса тăкнă. Тупăсем, минометсем, стрелоксен хĕçпăшалне нумай тытса илнĕ тата боеприпассен, апат-çимĕçпе ытти çар [illegible] тата пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Совет чăçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем пылчăка кĕрсе ларнă танкĕсене, тупписене тата автомашинисене пăраха-пăраха хăвараççĕ. Тăшман çарĕсемшĕн питĕ паха база пулса тăракан Старо-Константинов хули районĕнче пурнчен те хаяртарах çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем, хăйсен салтакĕсем темĕн чухлĕ нумай кĕтипне пăхмасăрах, Шепетовкăпа Старо-Константинов хушшинчи шоссе çулне хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшнă. Пирĕн çарсем, флангсенчен пыра-пыра çапса, тăшман çарĕсен кунта кĕрешекен ушкăнне темиçе пая уйăрса янă та çав ушкăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Совет чăçĕсем ăста маневрсем туса Старо-Константинов хули патне тĕрлĕ енчен пырса тухнă та тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма пуçланă. Ку районра кун каçиччен 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ тата 25 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупа пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем контратакăна 100 танка яхăн кĕртсе янă. Пирĕн танкистсемпе артиллеристсем тата бронебойщиксем нимĕçсен 42 танкне персе çунтарса янă тата сипленĕ, вара гитлеровецсем каялла чакнă.

* * *

Парва хули енче пĕр районра нимĕç пехотин пысăк вăйĕсем контратака пуçласа янă. Совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем, аса-çиçĕм пек вут-сулăм такса, тăшман речĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсене пĕр йĕрки-паллисĕр каялла чакма лекнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 900 виллине çити выртса юлнă. Нимĕçсен 3 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен темиçе туппине персе çĕмĕрнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсемпе техники пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă, нимĕçсене йывăр çухатусем кӳнĕ. Кун каçиччен пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, икĕ аэродромра тăшманăн 32 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем тăшманăн 4 тральщикне тата хуралта çӳрекен катерне шыва путарнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн пысăк обозне тапăннă. Хаяр тытăçура партизансем çав обозпа пыракан 98 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 407 лаша, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 108 лав тата 76 винтовка тытса илнĕ. Каменец-Подольск облаçĕн фронт çывăхĕнчи районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕ гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизийĕн 2-мĕш полкĕн 1-мĕш ротинчен Звенигородкăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тытăна илнĕ ефрейторсем Гергард Линднер тата Гергард Дамм çапла каласа кăтартнă: «Винница хулинчен хĕвелтухăçнерехре пынă çапăçусенче пирĕн полк хăйĕн техникин пысăк пайне çухатрĕ. Январь уйăхĕнче пĕрремĕш батальона хăй тĕллĕн çӳрекен çĕнĕ тупăсем пачĕç, иккĕмĕш батальона çĕнĕ танксем пачĕç. Январь уйăхĕн вĕçĕнче пире ытти танковăй чăçсемпе пĕрле Звенигородка районне куçарса килчĕç. Корсунь-Шевченковский районĕнче çавăрса илнĕ нимĕç çарĕсен ушкăнĕ патне тĕмĕнле пулсан та татса кĕме хушрĕç. Вырăс артиллерисчĕсем пире малтанхи кунсенчех питĕ пысăк çухатусем кӳчĕç. Анчах та офицерсем пĕрмаях çапла каласа тăчĕç: «Тĕмĕнле çухатусем пулсан та, пирĕн хамăрăн çавăрса илнĕ дивизисене «хуралран» çăлса кăлармасăр пулать» — тесе тăчĕç. Ĕç питĕ начар пĕтрĕ. Эпир хамăрăн пур танксене те тенĕ пекех çухатрăмăр, анчах та çавăрса илнĕ ушкăн патне татса кĕме пултараймарăмăр».

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

КОЛХОЗ БРИГАДИРĔ

Вăйпитти арçынсем фронта тухса кайнă хыççăн Фекла Ермолаева юлташа колхозниксен пухăвĕнче бригадира суйланă.

— Çамрăкрах та, анчах шултарулла хĕрача, вĕренни çитет, — тенĕ колхозниксем. Чăн та, малтанлăха халиччен ответлă ĕçре ĕçлемен 18 çулхи хĕрачашăн çак ĕç çăмăл пулман. Колхозра çын çитмен тата нумайĕшĕ «арçын ĕçĕнче» пулман хĕрарăмсем пулнă.

Фекла, бригадира кĕрсенех, çынсене звеносене уйăрса йĕркеленĕ, «арçын ĕçнех» хĕрарăмсене, çул çитмен çамрăксене явăçтарнă.

Калинино районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулне вăрçă вăхăтĕнчи пек кĕтсе илнĕ. Ака ĕçне, тырпулсене пухассине вăхăтра пурнăçланă, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татнă. Ермолаева юлташ бригади кашни гектартан вăтам шутпа 14,3-шер центнер ытла тĕштырă, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем гектартан 160-шар центнер пухса илнĕ.

Бригадир Ермолаева юлташ колхоз ĕçне хĕрарăмсене анлăн явăçтарнăшăн колхозницăсем ăна чĕререн тав тăваççĕ. Ксения Овчинниковăн 4 ача, упăшки фронтра, — вăл иртнĕ çул 365 ĕçкунĕ тунă. Наталия Сидоровăн та упăшки фронтра, вăл та 355 ĕçкунĕ тунă.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Д. С. Казаков юлташ, 57 çулхискер, Ермолаева юлташ çинчен сăмах пуçласан, çапла калать:

— Ĕçлеме пултаракан хĕрача, хушнине туни кăна мар, хăй те пуçарса ĕçлеме пултарать. Фекла пек маттур хĕрачасем колхоза ертсе пырас тĕлĕшпе хастар ĕçлеççĕ. Вăл хăй пĕччен çемьесĕр пуçне, 457 ĕçкунĕ турĕ, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕнче пулма тивĕçлĕх илчĕ, — тет.

Халĕ Ермолаева юлташ бригади хĕрсех çуракине хатĕрленет.

В. Я.

„БОЛЬШЕВИК" КОЛХОЗ ПЕК ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. (Телефонпа). «Большевик колхоз фронтовой уйăхлăхăн малтанхи кунĕсем тĕлнех çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ. Ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса çитернĕ. Планпа 14 плуг юсамалла пулсан, кунта 16 плуг юсанă, 10 сӳре вырăнне 12 сӳре юсаса хатĕрленĕ. Икĕ сеялка юсанă. Лаша кӳлмелли хатĕрсене те çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Çуракине хатĕрленсе çитес енĕпе колхоз тимĕрçи Трофимов юлташ мĕнпур вăйне хурса ĕçленĕ. Колхоз акма кирлĕ чухлех вăрлăх хатĕрлесе хунă. Вĕсене сортланă, шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. 9 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ.

Колхозăн вăрлăх çителĕклĕ, вăл кӳршĕри вăрлăх çитмен колхозсене те 120 пăт парать.

Осс. ДАВЫДОВ.

Гектартан 100 пăт тырă илессишĕн

ЙĔПРЕÇ. «Большевик» колхозра çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа уя 2.000 лав тислĕк кăларнă, 60 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 65 центнер кĕл пухнă. Уйрăмах 4-мĕш, 5-мĕш бригадăсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Вĕсем кашнинех 20-шер центнера яхăн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухса хунă.

Кăçал колхозниксем кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн вăйлă кĕрешӳ пуçарчĕç. Çавна май кашни бригада уя планран иртерсе 200-шер лав тислĕк кăларма, 3—4-шар центнертан кая мар кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма обязательство илнĕ.

П. КУРАКОВ.

Комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Ассакассинчи туллимар вăтам шкулти комсомолецсем пушă вăхăтсенче е канмалли кунсенче колхозсене çуракине хатĕрленме питĕ активлăн пулăшаççĕ. Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа вĕсем Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозра 20 центнер кĕл, 22 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хире 50 лав ытла тислĕк кăларнă. Çак ĕçре уйрăмах А. Михайлова, Т. Степанов, К. Игнатьева, Н. Михайлов комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем час-часах колхозниксене колхоз правленинче çĕнĕ хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Уйăхра пĕрре «Вăйлă тырпулшăн» ятлă стена хаçачĕ кăлараççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

КОЛХОЗСЕН вăрлăх фондне

Колхозсен вăрлăх фондне çак колхозниксем — Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсем хăйсен запасĕнчен хывнă:

И. ШАМБУЛЛИН — Комсомольски районри «Правда» колхоз членĕ—7 пăт çĕрулми.

Ф. ЯКАНОВ — çав колхозри колхозник—3 пăт çĕрулми.

И. КОШКИН — çав колхозри колхозник—2 пăт çĕрулми.

Е. АБУКИНА — çав колхозри колхозница—3 пăт çĕрулми.

С. ЧАЛАКОВ — çав колхозри колхозник—3 пăт çĕрулми

И. ЕРШОВ — Комсомольски районри «Новая жизнь» колхоз членĕ—3 пăт çĕрулми.

А. КОРНИЛОВ — Комсомольски районри «Красный борец» колхоз членĕ—15 пăт çĕрулми.

К. ТЕЛЛИН — Елчĕк районĕнчи «Комбайн» колхозри учетчик — 20 пăт тырă.

И. НИКОЛАЕВ—çав колхозри ферма заведующийĕ—20 пăт тырă.

В. РОМАНОВ — çав колхозри колхозник—10 пăт тырă.

В. САЛКИН — çав колхозри колхозник—10 пăт тырă.

Ф. СОРОКИН — Елчĕк районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ — 10 пăт тырă.

Н. ТИМОФЕЕВ— çав колхозри бригадир — 5 пăт тырă.

И. ВАСИЛЬЕВ — çав колхозри кладовщик — 10 пăт тырă

Кӳршĕри колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ

ЭЛĔК. (Хамăр корр). Комсомольски районри «Трактор» колхоз членĕсен пархатарлă пуçарăвне ырласа, районри колхозницăсем хăйсен запасĕнчен вăрлăх çитмен колхозсем валли тырă пухма тытăнчĕç. Çак ыйтупа халĕ колхозсенче ятарласах пухусем пулса иртеççĕ.

Хирлепуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз членĕсем вăрлăх çитмен колхозсене пулăшмалли фонда 100 пăт тырă, 150 пăт çĕрулми тата 10 пăт кантăр вăрри хывнă, Кив Матьăкри «Ударник» колхоз 80 пăт тырă, 150 пăт çĕрулми, 10 пăт кантăр вăрри пачĕ.

«Трактор» колхоз членĕсен пуçарăвне Ехремкасси ялсоветĕнчи колхозсем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вĕсем вăрлăх çитмен колхозсене пулăшма хăйсен запасĕнчен 150 пăт тырă, 30 пăт улма, 33 пăт кантăр вăрри уйăрса хучĕç.

Азаматри Киров ячĕпе тăракан колхоз районра чи пĕчĕк колхозсенчен пĕри шутланать. Çапах та ку колхоз членĕсем кӳршĕри колхозсене 40 пăт тырă, 50 пăт çĕрулми парса пулăшма кăмăл турĕç.

Х. ЛИСИН.

* * *

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). Фронтовой уйăхлăхра районри чылай колхозсем вăрлăхсене сортласа кондицие лартас тесе пикенсех ĕçлеççĕ. Нумай колхозсем вăрлăхсене çак кунсенчех хатĕрлесе çитереççĕ. Уйрăм колхозсем çитмен вăрлăхсене кӳршĕри колхозсемпе улăштарса илеççĕ. «Социализм» колхоз «Комбайн» колхозран тулăпа 20 центнер сĕлĕ улăштарса илчĕ. Анчах районра хăшпĕр колхозсен, уйрăмăнах Калинин, Молотов, Димитров ячĕпе тăракан тата «Красный металлист» колхозсен вăрлăхсем нумай çитмеççĕ. Вĕсене районри ытти колхозсем пулăшаççĕ тата вĕсем хăйсем вăрлăхлăх тырăсене ытти культурăсемпе улăштарса илеççĕ е сутăн илеççĕ.

Калас пулать, Комсомольски районри «Трактор» колхозăн паха пуçарăвне — колхоз членĕсенчен вăрлăхлăх тырă кивçен илессине —вăрлăх çитмен колхозсенче сарса яни çук-ха.

А. ГРОМОВ,

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). «Трактор» колхоз членĕсен паха пуçарăвне—çитмен вăрлăхсене колхоз членĕсенчен пухас ĕçе—районри нумай колхозсем ăшшăн йышăнса илчĕç. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ те вăл пуçарăва ырларĕ. Халĕ районра колхозниксенчен вăрлăхлăх тĕштырă, çĕрулми чылай пухнă. Уйрăмăнах ку ĕç «Янга Турмыш», «Красный Октябрь», «Новая жизнь» колхозсенче ăнăçлă пырать. «Янга Турмыш» колхозри колхозница Е. Я. Вахитова юлташ 21 пăт тĕштырă, «Красный борец» членĕ А. Г. Уткин 63 пăт çĕрулми, колхозник А. Портнов юлташ 15 пăт çĕрулми пачĕç.

— Хамăр колхоза çителĕклĕ вăрлăх хамăрах тупса парăпăр,—теççĕ районри колхозниксем.

АБАКУМОВ,

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ

* * *

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр., телефонпа). Районри колхозсем фронтовой уйăхлăхра çуракине хатĕрленес пирки аван ĕçлеççĕ. Уйăхлăх пуçланнă тĕле колхозсен 2.000 центнер вăрлăх çитместчĕ. Паянхи куна колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче улăштарса 820 центер тĕш тырă вăрлăхĕ, 640 центнер çĕрулми, 60 центнер техникăлла культурăсен вăрлăхне хыврĕç. Районри колхозниксем 284 центнер çĕрулми тăрри касса хатĕрленĕ.

Комсомольски районри «Трактор» колхоз членĕсен пуçарăвне колхозниксем ырласа йышăнчĕç. Районри 241 колхозник хăйсен колхозĕсене 128 центнер вăрлăх пухса пачĕç.

* * *

ВĂРМАР. (Хамăр корр., телефонпа). Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне районри 30 колхозăн хăшпĕр культура вăрлăхĕсем çитместчĕç. Паянхи куна çак колхозсенчен 19-шĕ çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрлерĕç. Пурĕ 848 центнер вăрлăх тупса хыврĕç. «Заря» колхоз членĕсем хăйсен колхозĕ валли 10 центнер пăрçа пухнă. «Труд» колхоз членĕсем те хăйсен колхозне 18 центнер вика вăрлăхĕ пухса панă.

С. ШАДИН.

„Новый мир" колхозăн лашисем начар

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çуракине кĕске срокра иртерес ĕçе лашасем çирĕп те сывлăхлă пулни татса парать. «Новый мир» колхоз правленийĕнче ĕçлекенсем (председателĕ Елаков) çакна ниепле те ăнланасшăн мар. Лашасене конюхсем мĕнле пăхнипе пачах интересленмеççĕ. Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе колхозра халĕ те йĕркелĕх туман, лашасем кунсерен начарланса пыраççĕ, мĕншĕн тесен конюхсем хăйсен ответлăхне туймаççĕ. Лашасене талăкра теплерен çеç пĕрер хут шăвараççĕ, лашасем чылай чухне апатсăрах тăраççĕ. Витесенчен лашасене канлĕн тăма вырăнсем çук. Вĕсем унта кĕтӳре çӳренĕ пек çӳреççĕ. Панă апат ытларах ура айĕнче таптанса пĕтет. Çакăн пек чунсăррăн пăхнипе ĕнтĕ «Новый мир» колхозра иртнĕ кунсенче 4 лаша начарланса вилнĕ.

— Апат начартарах, — тет Елаков юлташ, лашасем вăйсăрланни çинчен сăмах тапратсан. Анчах ку тĕрĕс мар. Малта пыракан колхозсем ытти выльăх-чĕрлĕхе çеç мар, лашасене те шултăра апат тĕрлĕ майпа хатĕрлесе çитерме тăрăшаççĕ. Ăшăрах кунсенче улăма вĕтĕ-вĕтĕ тураса, пĕри шывра ислетсе, клевор улăмĕнчен тунă çăнăхпа пăтратса çитереççĕ. Сăлле, урпана вĕтĕ турапă сур-тырри улăмĕпе хутăштарса параççĕ, утта пĕчĕкшерĕн, анчах час-часах парса тăрса, тирпейлĕн çитереççĕ.

«Новый мир» колхозра çак майсемпе пачах усă курмаççĕ. Лашасене пăхас ĕçе кунта йăлтах конюхсене шанса панă. Вĕсен ĕçне правлени тĕрĕслемест.

Лашасене колхозниксем çумне ячĕшĕн çеç çирĕплетнĕ. Вĕсене кам мĕнле ĕçе кӳлсе каяс тет, çавăнта кӳлсе каять, ыйтмасть те. Хăмăт-пăявсене тирпейлĕн тăхăнтармасăр, лашасен ӳт-пĕвне ватаççĕ.

«Новый мир» колхоз правленийĕн çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре ответсăрлăх пулмалла мар.

Г. ЕРИСОВ

Тивĕшсем васкамаççĕ

ИШЛЕИ. Кĕçех çураки çывхарса çитет, анчах Тивĕш ялсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленме васкамаççĕ-ха. «Тивĕш» колхозăн ялхуçалăх машинисем, плугсемпе сӳресем халĕ те юр айĕнчех лараççĕ. Колхозра, тимĕрçĕ çук тесе, плугсене юсама тытăнман та. Кăçал пĕр гектар та юр тытман. Çавăн пекех колхозра лашасем питĕ начар. Апла пулин те кунта выльăх апачĕсене тирпейсĕр тыткалаççĕ, утă-улăмсене колхозниксем хăйсен килĕсене йăта-йăта каяççĕ. Анчах та вĕсене уншăн тивĕçлĕ ответ тыттармаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вырăнти удобренисем пухас ĕçе пачах халамаççĕ. Колхозниксем кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкне урама е çырмана тăкаççĕ. Кунта çуракине тухма лашасем тата вĕсене кӳлмелли хатĕрсем те çителĕксĕр.

Ялсоветне кĕрекен ытти колхозсем те çуракине начар хатĕрленеççĕ. Ялсовет исполкомĕн тата колхоз председателĕсен çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымалла.

Н. АРХИПОВ.

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР Верховный Совечĕ йышăннă законсем

Российăн Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республикин 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан закон

Росси Советлă Федерациллĕ Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. РСФСР-ăн РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă 1944 çулхи государство бюджетне, бюджет комиссийĕн докладĕсем тăрăх йышăннă улшăнусене шута илсе, доходсем енĕпе 24.740.487 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 24.591.824 пин тенкĕ чухлĕ, çапла вара доходсем расходсенчен 148.663 пин тенкĕ ытларах пулмалла туса çирĕплетес.

2. Çак Законăн 1-мĕш статьи тăрăх, РСФСР-ăн республика бюджетне доходсем енĕпе 14.391.830 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 14.243.167 пин тенкĕ чухлĕ, çапла вара доходсем расходсенчен 148.663 пин тенкĕ ытларах пулмалла туса çирĕплетес.

3. Автономиллĕ республикăсен бюджечĕсене тата крайсемпе облаçсен тата РСФСР-а пăхăнса тăракан хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ çирĕплетес:

Пин тенкĕпе

	Доходсемпе расходсем енĕпе	Çав шутра: Государство налогĕсемпе доходĕсенчен республика бюджетне укçа-тенкĕрен кĕрекен пайĕ	Çав шутра: РСФСР бюджечĕн памалли дотаци	Çав шутра: ...отлашни доходсенчен РСФСР бюджетне илесси
1. Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	443.523	211.842	35.000	—
2. Бурят-Монгол Автономиллĕ Советлă Социализмлă республики	108.379	49.297	—	—
3. Дагестан Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	170.818	91.426	12.000	—
4. Кабардино-Балкар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	81.389	26.120	30.000	—
5. Коми Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	105.035	70.910	10.000	—
6. Мари Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	105.035	58.036	5.000	—
7. Мордва Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	165.449	94.710	21.000	—
8. Çурçĕр Осетин Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	89.012	31.093	—	—
9. Тутар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	513.872	234.086	—	42.867
10. Удмурт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	201.397	89.948	—	—
11. Чечено-Ингуш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	131.664	74.029	—	—
12. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	162.341	93.337	—	—
13. Якут Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	178.617	91.984	27.000	—
14. Алтай крайĕ	394.188	197.981	20.000	—
15. Краснодар крайĕ	431.651	152.689	6.000	—
16. Красноярск крайĕ	379.737	109.087	—	—
17. Приморье крайĕ	208.130	35.061	—	562
18. Ставрополь крайĕ	307.616	129.085	46.000	—
19. Хабаровск крайĕ	416.834	158.381	—	—
20. Архангельск облаçĕ	249.854	137.476	—	—
21. Астрахань облаçĕ	135.443	49.155	13.000	—
22. Вологда облаçĕ	278.834	156.028	—	—
23. Воронеж облаçĕ	441.343	228.322	67.000	—
24. Горький облаçĕ	423.751	130.772	—	—
25. Иваново облаçĕ	453.513	114.822	—	—
26. Иркутск облаçĕ	232.739	79.544	—	—
27. Калинин облаçĕ	388.436	188.328	14.500	—
28. Кемерово облаçĕ	318.282	109.904	—	—
29. Киров облаçĕ	384.959	217.413	—	—
30. Куйбышев облаçĕ	218.073	104.188	—	—
31. Курган облаçĕ	218.744	118.078	20.000	—
32. Курск облаçĕ	356.584	142.499	130.000	—
33. Ленинград облаçĕ	235.714	101.249	26.000	—
34. Молотов облаçĕ	346.043	116.578	—	—
35. Мускав облаçĕ	960.903	104.948	—	134.978
36. Мурманск облаçĕ	72.025	32.153	5.000	—
37. Новосибирск облаçĕ	329.467	164.160	—	—
38. Омск облаçĕ	454.164	238.805	—	—
39. Орел облаçĕ	389.566	135.103	182.000	—
40. Пенза облаçĕ	216.159	94.063	13.000	—
41. Ростов облаçĕ	439.499	179.304	65.000	—
42. Рязань облаçĕ	278.450	147.433	2.000	—
43. Саратов облаçĕ	323.894	134.222	—	—
44. Свердловск облаçĕ	466.294	138.110	—	—
45. Смоленск облаçĕ	326.402	91.787	182.000	—
46. Сталинград облаçĕ	367.476	173.924	50.000	—
47. Тамбов облаçĕ	251.853	113.566	20.000	—
48. Тула облаçĕ	276.430	85.196	—	—
49. Ульяновск облаçĕ	167.332	63.459	14.000	—
50. Челябинск облаçĕ	298.300	100.567	—	—
51. Чита облаçĕ	197.503	100.384	—	—
52. Чкалов облаçĕ	307.187	145.899	—	—
53. Ярославль облаçĕ	397.345	123.775	—	—
54. Горький хули	249.935	25.340	—	100.459
55. Куйбышев хули	222.259	21.171	—	102.540
56. Ленинград хули	675.668	160.193	—	—
57. Молотов хули	159.502	16.747	—	83.116
58. Мускав хули	1.939.600	172.478	—	713.831
59. Новосибирск хули	178.011	22.131	—	71.590
60. Саратов хули	178.436	13.668	—	87.715
61. Свердловск хули	238.777	27.626	—	91.714
62. Челябинск хули	140.468	16.815	—	60.174

4. 1944 çулта РСФСР-ти АССР-сене крайсен, облаçсен тата РСФСР-а пăхăнса тăракан хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ укçа уйăрса памалла тăвас:

а) колхозсенчен илекен подоходнăй налогран — 25 процент;

б) тырăр сутмасăр кĕрекен доходсенчен илекен налогран — 100 процент;

в) уйрăм хуçалăхри хресченсем тытакан лашасем çине хуракан государство налогĕнчен — 75 процент;

г) машинно-тракторнăй станцисен доходĕсенчен — районсенчи бюджетсене яма — 15 процент.

5. Халăхран пухакан подоходнăй налогран, колхозниксемпе единоличниксенчен пухакан ялхуçалăх налогĕнчен, военнăй налогран тата государство заемĕсенчен пухăнакан укçа-тенкĕрен 1944 çулта АССР-семпе крайсен, облаçсен тата РСФСР-а пăхăнса тăракан хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ укçа уйăрса памалла тăвас:

	Миçе % уйăрса памалла: Халăхран пухакан подоходнăй налог укçинчен	Колхозниксемпе единоличниксенчен пухакан ялхуçалăх налогĕнчен	Военнăй налог укçинчен	Халăх хушшинче саракан государство заемĕсен укçинчен
1. Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	10	25	5	15
2. Бурят-Монгол Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	10	25	5	15
3. Дагестан Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
4. Кабардино-Балкар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
5. Коми Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	10	25	5	25
6. Мари Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	15	25	5	25
7. Мордва Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
8. Çурçĕр Осетин Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
9. Тутар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	15	25	5	10
10. Удмурт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	10	20	5	10
11. Чечено-Ингуш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
12. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	10	25	5	15
13. Якут Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	25	25	5	25
14. Алтай крайĕ	15	15	5	15
15. Краснодар крайĕ	10	25	5	15
16. Красноярск крайĕ	10	25	5	15
17. Приморье крайĕ	5	10	—	10
18. Ставрополь крайĕ	25	25	5	15
19. Хабаровск крайĕ	5	10	5	10
20. Архангельск облаçĕ	15	25	5	15
21. Астрахань облаçĕ	10	10	5	15
22. Вологда облаçĕ	25	25	5	15
23. Воронеж облаçĕ	25	25	5	25
24. Горький облаçĕ	5	10	—	5
25. Иваново облаçĕ	5	10	—	5
26. Иркутск облаçĕ	10	25	5	10
27. Калинин облаçĕ	15	25	5	15
28. Кемерово облаçĕ	5	20	5	10
29. Киров облаçĕ	10	25	5	15
30. Куйбышев облаçĕ	10	15	5	10
31. Курган облаçĕ	15	25	5	15
32. Курск облаçĕ	25	25	5	25
33. Ленинград облаçĕ	25	25	5	25
34. Молотов облаçĕ	5	15	5	10
35. Мускав облаçĕ	5	5	—	5
36. Мурманск облаçĕ	25	25	5	25
37. Новосибирск облаçĕ	15	25	5	10
38. Омск облаçĕ	10	25	5	15
39. Орел облаçĕ	25	25	5	25
40. Пенза облаçĕ	10	20	5	15
41. Ростов облаçĕ	25	25	5	25
42. Рязань облаçĕ	10	20	5	15
43. Саратов облаçĕ	10	15	5	15
44. Свердловск облаçĕ	5	10	5	5
45. Смоленск облаçĕ	25	25	5	25
46. Сталинград облаçĕ	25	25	5	25
47. Тамбов облаçĕ	10	10	5	15
48. Тула облаçĕ	5	10	5	10
49. Ульяновск облаçĕ	5	20	5	10
50. Челябинск облаçĕ	5	10	5	10
51. Чита облаçĕ	10	25	5	15
52. Чкалов облаçĕ	10	15	5	15
53. Ярославль облаçĕ	5	10	5	10
54. Горький хули	5	10	—	5
55. Куйбышев хули	5	10	—	5
56. Ленинград хули	10	—	—	10
57. Молотов хули	5	—	—	5
58. Мускав хули	5	25	—	5
59. Новосибирск хули	5	—	—	5
60. Саратов хули	5	—	—	5
61. Свердловск хули	5	25	—	5
62. Челябинск хули	5	—	—	5

6. РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе, оборотран илекен налогран укçа уйăрса парас тĕлĕшпе РСФСР Верховнăй Совечĕ çирĕплетнĕ суммăсемпе килĕштерсе, çав налогран кашни АССР-а, края тата облаçе укçа уйăрса памалли процентсене палăртса пама хушас.

7. РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Крым АССР-ĕн 1944 çулхи бюджетне пăхса тухма хушас.

8. Государство бюджетне пурнăçа кĕртнин çак отчечĕсене çирĕплетес: 1940 çулта доходсем 25.551.179 пин тенкĕ, расходсем 24.892.076 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 659.103 пин тенкĕ ытларах пулнă, 1941 çулта доходсем 20.858.674 пин тенкĕ, расходсем 20.263.442 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 595.232 пин тенкĕ ытларах пулнă, 1942 çулта доходсем 20.513.016 пин тенкĕ, расходсем 19.153.472 пин тенкĕ пулнă, доходсем расходсенчен 1.359.544 пин тенкĕ ытларах пулнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи мартăн 4-мĕшĕ.

Лашасене лайăх пăхас пулать

КАЛИНИНО. Çурхи тырăсене вăхăтра та лайăх акса хăварас тесен, лашасене питĕ тăрăшса пăхни кирлĕ.

Услапари «Броневик» колхозра ĕçрев килнĕ лашасене конюхсем тĕрĕслесе йышăнаççĕ. Ут тавраш̆ĕсене яланах юсавлă тытаççĕ. Кунта кашни лашашăн уйрăм колхозниксем ответлă пулса тăраççĕ. Колхоз председателĕ коммунист М. Федоров юлташ конюхсем лашасене мĕнле пăхнине яланах хăй тĕрĕслет.

Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозри М. Ефимова, А. Белова тата Ф. Федорова конюхсем те хăйсем çумне çирĕплетнĕ лашасене питĕ юратса пăхаççĕ. Вĕсем лашасене яланах нормăпа апат çитереççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, кашни кунах хырчăкласа тасатаççĕ. Çавăнпа вĕсем пăхакан лашасем мăнтăр та таса. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсене колхоз правленийĕ темиçе хут та тав тунă, ĕçкунĕсем хушса панă.

Ку колхозра ут хатĕрĕсене те юсавлă тытаççĕ. Сураки вăхăтĕнче чăрмавсем ан пулччăр тесе, Я. Леонтьев, С. Евграфов шорниксем ут таврашĕсене юсаса çитернĕ хыççăн 10 хăмăт, 9 тилхепе, 7 урхалăх, 7 йĕвен тата ытти япаласем те запаслăх хатĕрлерĕç.

Анчах лашасене пур колхозсенче те мар-ха çакăн пек юратса пăхаççĕ.

Сăкатри Буденный ячĕпе тăракан, Тури Кăкапарти «Правда», Кадеркинăри «Молния» колхозсенче лашасем валли хăвармă апатсене перекетлĕн тыткаламасăр пĕтерпĕ. Шнакассинчи «Броневик», Чăрăш Хирлепри «Радио» колхозсенче ĕç лашисене, тискеррĕн тыткаланине пула, суранлантарса пĕтерпĕ. Лашасене çĕмĕрсе пĕтерекен колхозниксене ответ тыттарман-ха.

Авăрçырмари «Дружба» колхозра та лашасем çине ытла та ответсăррăн пăхаççĕ. Çавна пула, колхозри мĕнпур лашасем ырхан. Кунсăр пуçне, лашасене ним йĕркесĕр тыткалаççĕ. П. Силовпа А. Андреева ертсе пыракан 3-мĕшпе 2-мĕш бригадăсенче лашасен мăйĕсемпе çурăмĕсем хăмăт-йĕнерчĕк тивнипе шăйăрăлса пĕтнĕ.

Тĕслĕхрен, 2-мĕш бригадăри А. Осипова колхозница вăрмана кайса килнĕ хыççăн «Гнедко» ятлă лашана пĕр уйăх хушши кӳлеймерĕç. Çакнашкал тĕслĕхсем колхозра татах та чылай.

Колхоз правленийĕ (председателĕ И. Петров) лашасене йĕркесĕр тыткалакансене хирĕç кĕрешмест. Вăл вĕсене хӳтĕлесе пырать.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Ют çĕршывсенчи хаçатсем Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Франс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Мускав перемири условийĕсене пичетлесе кăларни Финляндин руководителĕсене, вĕсем чăнах та перемири тăвас тесçĕ пулсан, Мускава кайма пулăшма пултарать.

Финлянди руководителĕсем финн халăхне хирĕç пыракан решени йышăнма пултарни çинчен каласа, хаçат çапла çырать: «Финлянди руководителĕсем Финляндие вăрçăран илсе тухĕç-и, тухмĕç-и, — Мускав условийĕсене пĕтĕм тĕнче мĕнле йышăнса илни Германи вассалĕсене пурпĕрех шухăшлаттарĕ. Вăл миршĕн ытларах тăрăштарĕ».

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Новер çапла çырать: Совет Союзĕ Германи çарĕсене Финляндирен кăлармасăр тытса чарма сĕнни ăслă япала пулса тăрать, Совет Союзĕ территори тĕлĕшпе тăратнă условисем те «эпир кĕтме пултарнинчен лайăхрах» пулчĕç тет.

Çак ыйту тĕлĕшпе çырнă хаçатсем пурте, «Дейли Ньюс» хаçатсăр пуçне, совет условийĕсене ырлаççĕ.

ОТТАВА, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС): Канада хаçачĕсем Совет Союзĕ Финляндипе перемири тума сĕннĕ условисене ырлаççĕ, Финлянди çав условисемпе килĕшменни калама çук пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ, теççĕ.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндин столицинче е ытти хулисенче тухакан хаçатсем пĕри те совет условийĕсене йышăнма сĕнмен-ха. Финляндирен килнĕ хыпарсем тăрăх, Финлянди правительстви, Паасикиви пуçланă çыхăнăва татасшăн мар пулса, малалла та хаклашасшăн, вăл малашне те хăйĕн «мĕн пуласси не кĕтсе тăрас» политикине тытса пырасшăн. Кунсăр пуçне тата çапла пĕлтереççĕ: Финлянди правительстви Финлянди вăрçма пăрахассине Берлин килĕшĕ тесе шанса кĕтсе тăрать. Çавăнпа та Дитль çарĕсене Финляндирен кăлармасăр тытса чармалли çинчен калакан пункта (ытти пунктсене те) ниепле те йышăнма çук, тесе шутлаççĕ.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» хаçатăн Хельсинкири корреспонденчĕ çапла çырать: вырăссен условийĕсем калаçса татăлма пулăшас çук пуль. Финлянди хаçачĕсем çырнă тăрăх тата Хельсинкири политика деятелĕсем хушшинче пуçланса кайнă дискусси тăрăх шутласан çавăн пек вывод тумалла пулать.

«Моргĕн Тиднинген» хаçат Линдстремăн статьине пичетленĕ. Линдстрем çапла çырать: «Финляндири нумай хаçатсем çырнă тăрăх шутласан, Финлянди халăхĕ çав условисем çинчен лайăхах пĕлмест-ха. Финляндин халь шанчăк пур. Анчах та вăл ĕмĕрлĕхе тăсălма пултараймасть. Финсен унпа часрах уса курас пулать. Финляндин халь йывăр ларуран тăрăх тухма май пур. Финсем çав майпа уса куманни тĕлĕнтернĕ пулĕччĕ».

«Дагенс нюхетер» хаçат çапла çырать: Финлянди хаçачĕсем вырăссен условийĕсем çинчен çырни питĕ хуйхăртать. «Финлянди нимĕç çарĕсенчен хăтăлас тет пулсан, — тесе çырать хаçат, — унăн нимĕçсем хăйсем тухса каясшăн мар пулнă пирки çеç мар ĕçне пĕтерсе лартма тата хăйĕн пĕтсе ларма кирлĕ-ши?»

Англи хаçачĕн корреспонденчĕ Турцие çар хатĕрĕсем яма чарса лартни çинчен

«Дейли мейл» хаçатăн Стамбул хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Англирен Турцие çар хатĕрĕсем ярса тăрассине, вăл шутра нефть ярса тăрассине те, чарса лартнă. Çак юлашки эрнесенче Турцирен Англин хăшпĕр авиаци инженерĕсемпе çар инженерĕсене те каялла чĕнсе илнĕ. Çак ĕç,—тесе çырать корреспондент,—Англипе Турци хушшинчи калаçусем чарăнса ларнă хыççăн çапла пулса тăнă. Çар хатĕрĕсем ярса тăрассине чарса лартни урăх сăлтавсемпе те пулма пултарнă, анчах çапах та Турцие ку ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ. Çакăн пек шутлама пулать: Англи хăй Турцие ярса тăракан çар хатĕрĕсемпе Турцире кирлĕ пек уса курас çуккине пĕлсен вăл çав вăрçă хатĕрĕсене урăх вырăнсене, сăмахран — Бирмăна, Итали фронтне е Россиăна яма шутлама пултарнă пулĕччĕ».

Çавăн пек хыпарсене Англире тухса тăракан ытти хаçатсем те пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Рейтер агентстви Англипе Турци хушшинчи ăнăçусăр калаçу пирки калани

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти специальнăй корреспонденчĕ Мартин çапла çырать: Каирти шанчăклă ушкăнсенче мартăн 6-мĕшĕнче паллă пулса тăнă тăрăх, нумаях пулмасть Англин çар миссийĕ Турцие пынă пулнă. Анчах Турцири хăшпĕр ушкăнсем хушшинче пуç пулса тăракан политикăллă шухăш-кăмăлсене пула калаçу ăнăçман. Пĕлтернĕ тăрăх, турксем хăйсен çĕрĕ çинче авиаци базисем пама килĕшмен тата вĕсен аллине хăйсене кирлĕ чухлĕ вăрçă материалĕсем илсе пымасан,—çав материалсене турттарма чылай уйăхсем кирлĕ,—вăрçа хутшăнма тӳрремĕнех хирĕçленĕ. Паллă пулса тăнă тăрăх, калаçусем вăрçă ĕçĕсем пирки кăна пынă, анчах миссин руководителĕсен ниллĕк эрне иртнĕ хыççăн ирĕксĕрех Турцин генеральнăй штаб начальникĕпе Казым Орбая хăйсем Турцирен халех тухса кайма шут тытни çинчен пĕлтерме лекнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, турксем хăйсем кăмăл тумасан, Англипе Турци хушшинчи калаçусене çĕнетсе ямалли сăлтавсем çук, тесе палăртаççĕ Каирта. Акăлчансем калаçăва малалла тăсас пирки хирĕçленни турксемшĕн кĕтмен япала пулса тăнă. Турксем çав калаçусенче акăлчансенчен хăйсем илме пултарнинчен нумайрах ыйтнă. Калаçу вăхăтĕнче, нимĕçсем Анатоли, унтан Сири патнелле куçса пыма пултарнă пек курăннă вăхăтра, турксем çар материалĕсем тăратас пирки Аданьре тунă списокра кăтартнă материалсене пама ыйтнă.

Турци политикăллă деятелĕсем,—тесе палăртать корреспондент,—Турцие пимĕнле обязательствăсемпе те çыхăнтармасăр, ытларах япаласем илесшĕн пулнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Анцио плацдармĕн районĕнче тата американсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче разведка чаçĕсем кĕрешнĕ. Кассинора вăйлă çапăçусем пыраççĕ тесе пĕлтереççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕнчи Инди чаçĕсем тăшманăн пысăк мар вăйĕсем пуçласа янă икĕ атакăна сирсе янă. Тăшмана çухатусем кӳнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири çар объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата тăшманăн Далмаци çыранĕсем çывăхĕнче пулнă суднисене тата Югославири çулйĕрĕсене атакăланă.

Çурçĕр Италире пĕтĕмĕшле забастовка пырать

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Францире Итали чиккинчен çитнĕ хыпарсем тăрăх, мартăн 2-мĕшĕнче Милан хулинче пĕтĕмĕшле забастовка пуçланса кайнă, вара вăл пĕтĕм Çурçĕр Италийĕпе сарăлса кайнă. Швейцарире тухса тăракан «Националь цейтунг» ятлă хаçатăн корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, забастовкăна вăрттăн ĕçлекен комитет организацилесе янă, ертсе пырасса та вăлах ертсе пырать. Забастовка Италин Тосканăпа Эмилия районĕсенчен çурçĕрелле-рехри мĕнпур районсенче те Франци, Швейцари тата Австри чиккисене çитиччĕнех сарăлса кайнă. Çак забастовка пирки фашистла влаçсем локаут пуçласа янă. Локаут мартăн 8-мĕшĕччен пырать тесе пĕлтернĕ, Италири пысăк çар завочĕсем, сăмахран Бред, Пирелли тата ытти заводсем те ĕçлемеççĕ. (ТАСС).

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Италири пĕтĕмĕшле забастовка сарăлсах пырать. Милан хулинче газ та, электричество та çук. Пӳртсен стенисем çине плакатсем çыпăçтарса тухнă. Плакатсем çине çапла çырнă: «Нимĕç заводчикĕсене—вилĕм», — тенĕ. Милан хулин урамĕсенче пулса иртнĕ çапăçусем вăхăтĕнче хулан фашистла префекчĕн заместительне Лундин Атторене вĕлернĕ. Миланри халăха кашни 7 сехетрен пуçласа ирхине 5 сехет çитиччен урама тухма чарнă.

Кĕскен

● Çак кунсенче Торонто хулинче (Канада) «Сталинград кунĕ» туса уявласа ирттернĕ. Уява туса ирттерме çар, тĕрлĕрен обществăллă тата чиркӳ организацийĕсен представителĕсем хутшăннă.

● Англин тинĕс министерстви «Пенелопа» ятлă крейсер тата «Инглифилд» ятлă эсминец пĕтни çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совечĕн Президиумĕ Анатолий Иосифович Лаврентьев юлташа РСФСР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă.

* * *

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Виктор Семенович Козлов юлташа ССР Союзĕн Эфиопири чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00576 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 11.100 экз.